Муркаш район хаçачӗ

# Çӗнтерӳ ялавӗ

1944 çулхи майăн 5-мӗшӗнчеп тухать

65 (7705) № ✻ Шăмат кун, 2009 çулхи августăн (çурла) 15-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

«Вырма – 2009» маршручӗсемпе

## Талăкӗпех ӗç чарăнмасть

***Августăн 14-мӗшӗ тӗлне район-ти хуçалăхсем 6310 гектар çинче (45 процента яхăн) вырма ирт-тернӗ. Кӗрхи пусăсенче вырма ӗçӗсем вӗçленнӗ май «хир карапӗ-сем» çуртрисем çапса тӗшӗлеççӗ. Çак куна тырă-пулăн малтанхи вă-там тухăçӗ 24,9 центнер. Хуçалăх-сем 4281 гектар çинчи улăма пух-са тирпейленӗ.***



Çапла пӗтӗмлетӳ турăм эпӗ иртнӗ юн кун, çурла уйăхӗн 12-мӗшӗнче, «Герой» ял хуçалăх производство кооперативӗн Кӳстерекри йӗтем çинче ӗçлекенсемпе тӗл пулса калаçсан.

Йӗтем тата склад заведующийӗ Нина Сорокина ертсе те йӗркелесе пынипе эпӗ пырса кӗнӗ чух кунта алă усса ларакан çукчӗ. Тырă пушатнă автомашина хирелле хускалнă май тырă алакан-сем тӳрех хиртен килнӗ тырăна алама пуçларӗç.

– Хуçалăхри вырма ӗçӗсем ытларах тӗп вӗтӗме çыхăннăран эпир юлашки кунсенче çеç тырă йышăнса алама-типӗтме тата кӗлете кӗртме тытăнтăмăр. Çапах пӗр ӗçе те кая хăварас килмест, – йывăç кӗреçепе хиртен килнӗ тырăна сортировкăна янă çӗртен пăрăнса каларӗ Н. Сорокина **(сăн ӳкерчӗкре сылтăмри)** юнашар ӗçлекенсем çинчен куç илмесӗр. Унăн калаçăвне пӗрле ӗçлекен Зоя Павлова сортировщица малалла тăсрӗ:

– Хуçалăхри ӗç условийӗсем тивӗç-тереççӗ. Инçете çӳремелле мар. Мӗн кирлӗ тата ял çыннине. Пирӗн паянхи тӗллев – хиртен килнӗ тырра вăхăтра типӗтсе-аласа кӗлете кӗртсе хурасси. Ӗç условийӗсемпе килӗшӳллӗ ӗç укçи те, тырри-пулли те ытти çулхинчен япăх пулмалла мар. Çавна шанса ӗçлетпӗр те.

Ыррине шанса, ӗç условийӗсене пӗлсе вăй хураççӗ Кӳстерексем. Ӗçе кунта икӗ сменăпа йӗркеленӗ. Çакă ăшă та уяр кунсемпе туллин усă курма май парать. Хӗрарăмсен сăмахӗсене тӳрех тиесе тултарса кӗлете çул тытакан грузчиксем те çирӗплетрӗç. Сергей Евдокимов, Алексей Малеев, Владислав Чернов çӗнӗ тырăна кӗлете çухату-семсӗр кӗртессипе ӗçлеççӗ. Тырă тур-туртарнă çӗрте тимлекен И. Федоров водитель те ыттисен шанăçне тӳрре кă-ларассипе тăрăшать.

Тепӗр ала агрегачӗ патӗнче вăй хуракан Алим Михайлович Сорокинпа Константин Юрьевич Евруков çав вăхăтра çӗнӗ тырăпа тулнă михӗсене грузчик-сем валли куçарма пуçларӗç.

«Герой» ял хуçалăх производство кооперативӗ вырмалли 647 гектартан ытларах пайне пуçтарса кӗртнӗ ӗнтӗ. Вăтам тухăç 22,6 центнер. «Хир карапӗ-сем» хыççăн юлакан улăм та çийӗнчех пуçтарăнса пырать. Çавăнпа пӗрлех хуçалăх 10 гектар çӗр улми кăларнă, кӗр аки валли 300 гектара яхăн çӗр хатӗрленӗ.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчӗкӗ.**

Сăмах – министра

## Çӗрпе эффективлă ӗçлесси – тӗп задача

***Юлашки 15 çулта Раççейре сухаламалли çӗрсен калă-пăшӗ 10 миллион гектар сахалланнă. 30 миллион гектара яхăн ял хуçалăх çӗрӗсемпе тӗллевлӗ усă курмаççӗ. РФ ял хуçалăх министрӗн çумӗ С. Королев каланă тă-рăх, ял хуçалăх продукцийӗ туса илессин калăпăшӗ кă-çал иртнӗ çулхинчен 1,7 процент пӗчӗкленет. Чăваш Енре çӗр тӗп производство хатӗрӗ тата наци пуян-лăхӗн уйрăлми пайӗ шутланать. Республика харпăрлă-хӗнчи ял хуçалăх пӗлтерӗшлӗ çӗрсен пурнăçӗпе интересленсе эпир ыйтусем çине хуравлама ЧР Пурлăхпа çӗр хутшăнăвӗсен министрне А.М. СТАЛЬСКАЯНА ыйтрă-мăр.***

**– Алла Михайловна, Чăваш Республикин харпăрлăхӗнчи çӗрсен лаптăкӗ мӗнлерех? Вăл шутра ял хуçалăх çӗрӗсем мӗн чухлӗ?**

– Чăваш Республикин харпăрлăхӗнче 2009 çулăн утă уйăхӗн 1-мӗшӗ тӗлне 18 пин гектар çӗр. Вӗсенчен 10160 гектарӗ – ял хуçалăх пӗлтерӗшлӗ çӗрсем. Ку вăл республикăн çӗр фончӗн 1 проценчӗ пулать.

**– Республика хăйӗн çӗрӗпе епле усă курать-ха?**

– Ял хуçалăх çӗрӗсен 9 пин гектарне предприяти-организацисемпе уйрăм çынсене арендăна панă. Пин гектара яхăн çӗре предприяти-организацисене ял хуçалăх производстви валли тата наукăпа тӗпчев ӗçӗсем тума сроксăр панă.

Арендăна панă ял хуçалăх пӗлтерӗшлӗ çӗрсен 86 проценчӗ ӳсен-тăран ӳстермелли çӗрсем. Çав шутра 6 пин гектара яхăн (74 процент) сухаламалли пусăсем. Утă çулмалли тата выльăхсем çӳретмелли вырăнсем пӗтӗмпе 2 пин гектара яхăн (24 процент). Ытти – вăрмансем.

(Вӗçӗ 2-мӗш стр.).

РФ Пенси фондӗнчен пӗлтереççӗ

## Çитес çултанпа пенси укçи «минимумран» пӗчӗк пулмасть

2009 çулхи июлӗн 24-мӗшӗнче йышăннă 213 № Федераллă саккунпа килӗшӳллӗн ӗçлемен пенсионерсене, вӗсен пенси укçи регионти пурăнма кирлӗ минимумран пӗчӗкрех пулсан, 2010 çултанпа пенси укçи çумне хушма социаллă тӳлев хушса параççӗ.

Пенсионерăн пӗтӗмӗшле тупăшне шутланă чух вара Раççей Федерацийӗн тата Чăваш Республикин саккунӗсемпе палăртнă тӳлевсене шута илеççӗ. Çапла вара пенси укçи, социаллă пулăшу, уйăхсерен тӳлесе тăракан укçа (ЕДВ) тата ЧР саккунӗсемпе çирӗплетнӗ ытти тӗрлӗ пулăшу калăпăшӗ те пӗтӗмӗшле тупăша кӗрет. Кунсăр пуçне ун шутӗнче – телефонпа усă курнăшăн, пурăнмалли çурт-йӗр тата коммуналлă услугăсемшӗн, транспортпа усă курнăшăн паракан компенсацисем те.

Хальхи вăхăтра нумайăшӗн ӗç пенсийӗсем пенсионерăн пурăнма кирлӗ минимумран пысăкрах. Декабрь уйăхӗнче вара пенси укçи татах та ӳсмелле. Çав вăхăтрах хăшӗ-пӗрисен пенси укçи «минимумран» пӗчӗкрех те. Кусем вӗсем социаллă пенси тата çемьене тăрантаракан вилнипе пенси илсе тăракансем, 3 группа инвалидӗсем.

Çак хушма социаллă тӳлеве республикăри Пенси фончӗн управленийӗсенчен пенси укçипе пӗрлех тӳлесе тăрӗç. Çавăнпа та ӗçлемен пенсионерсен Пенси фончӗн районти управление пырса заявлени çырмалла. Хушма тӳлеве заявлени çырнă уйăх хыççăнхи тепӗр уйăхра пенси укçипе пӗрле пама палăртаççӗ.

Инвалид ачасене, 18 çула çитмен тăлăх ачасене хушма социаллă тӳлевсене ятарлă заявлени çырмасăр та çӗнӗрен шутласа хушса параççӗ.

2010 çулта асăннă категорисенчи пур пенсионер та социаллă тӳлеве илме заявлени çулталăк вӗçлениччен (2010 çулхи декабрӗн 31-мӗшӗччен) çырать пулсан та, тӳлеве 2010 çулхи январӗн 1-мӗшӗнченех пенси укçи шутне кӗртеççӗ. 2011 çулхи январӗн 1-мӗшӗ хыççăн заявлени çырса панисене малашне асăннă йӗркепе (хыççăнхи уйăхра) тӳлӗç.

Хушма социаллă тӳлеве парассине пенсионерсен пурăнма кирлӗ минимумӗ, пенси укçи (унпа пӗрле паракан пулăшусен калăпăшӗ те), социаллă пулăшусемпе компенсацисен калăпăшӗ улшăнсан çӗнӗрен пăхса тухаççӗ.

Хушма социаллă тӳлеве ӗçлемен пенсионерсене çеç параççӗ. Çавăнпа та пенсионер ӗçе вырнаçсан пулсан, кун пирки Пенси фондне пӗлтермелле.

Пенси фончӗн республикăри уйрăмӗ халӗ хушма социаллă тӳлевсене пенсионерсен патне вăхăтра çитерессине йӗркелессипе ӗçлет. Ӗçе хăвăртлатма электронлă майпа та усă курӗç.

Пенсионерсен пурăнма кирлӗ минимумӗ паян 3451 тенкӗпе танлашать.

**Е. АЛЕКСАНДРОВА,**
**Пенси фончӗн районти управленийӗн ертӳçи.**

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградăланă

***Район администрацийӗн пуçлăхӗн августăн 6-мӗшӗнчи 423 № йышăнăвӗпе район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградăланă:***

Строительствăра нумай çул тӳрӗ кăмăлпа ӗçленӗшӗн:

**Раиса Александровна АНТОНОВАНА**, Муркашри кирпӗч завочӗн тӗп бухгалтерне,

**Меркурий Иванович ГАВРИЛОВА**, «Моргаушская» МСО водительне,

**Борис Васильевич МОКШАНОВА**, «Моргаушская» МСО база пуçлăхне,

**Надежда Геннадьевна ИВАНОВАНА**, Муркашри кирпӗч завочӗн съемщикне,

**Татьяна Гордияновна КОЗЛОВАНА**, Муркашри кирпӗч завочӗн съемщикне.

Строительствăра тунă çитӗнӳсемшӗн:

**Андрей Иванович САХАРОВА**, «Моргаушская» МСО каменщикне,

**Владислав Николаевич СЕМЕНОВА**, «Моргаушская» МСО генеральнăй директорне.

Суту-илӳре нумай çул тухăçлă ӗçленӗшӗн **Зинаида Алексеевна МИХАЙЛОВАНА**, «Визит» суту-илӳ çурчӗн директорӗн çумне.

Çичӗ уйăх итогӗсем

## Промышленность

Районти промышленность предприятийӗсем кăçалхи 7 уйăхра 334 миллион та 208 пин тенкӗлӗх продукци кăларнă. Ку кăтарту иртнӗ çулхи çак тапхăртин 46,1 проценчӗ пулать. Уйрăмах кăткăс лару-тăру «Сеспель» предприятире: 22,4 процент. Кирпӗч заводӗнче те йывăрлăхсем пур. Кунта продукци пӗлтӗрхин 37,8 проценчӗ чухлӗ кăларнă. Кая юлнисен йышӗнче: «Моргаушавтотехсервис» – 61,1 процент, «Вита» – 67,1 процент.

Çав хушăрах çăкăр пӗçерекенсем, газ, коммуналлă хуçалăхсем тата почта ӗçченӗсем иртнӗ çулхинчен аванрах ӗçленӗ.

Кӗскен

## Арçын ачасем ытларах

ЗАГС пайӗнчен пӗлтернӗ тăрăх, августăн вуннăмӗшӗ тӗлне районта пурӗ 239 ача çуралнă. Вӗсенчен 121-шӗ çемьере пӗрремӗшсем, 84-шӗ – иккӗмӗшсем, 25-шӗ – виççӗмӗшсем. Тепӗр тăххăрăшӗ – тăваттăмӗш тата малаллахи ачасем. Йӗкӗреш ачасем (пурте арçын ачасем) те пур вӗсен хушшинче. Пӗр çемьере вӗсем çиччӗмӗшпе саккăрмӗш, тепринче вара – виççӗмӗшпе тăваттăмӗш ачасем. Çураласса вара арçын ачасем пурӗ 137, хӗр ачасем – 102 çуралнă.

Ашшӗ-амăшӗсем Максим (13), Никита (8), Александр (7), Анастасия (10), Дарья (9), Анна (8) ятсене ытларах килӗштерни курăнать. Çавăнпа пӗрлех е питӗ сайра тӗл пулакан ятсем, е çуралнă кунсенчи çветтуйсен ячӗсене пама тăрăшаççӗ хăйсен пепкисене. Сайра ятсем хушшинче çаксем: Тимофей, Матвей, Павел, Аркадий, Серафима, Арсения, Виталина, Фекла тата ыттисем те. Пирӗн районта Камилла, Лола, Дамира, Айрат, Зулайко, Радомир ятлă пепкесем те ӳсеççӗ иккен.

## Çамрăксем тата ӗç ыйтăвӗ

Ял хуçалăхӗнче специалистсем çитменни пытармалли пулăм мар ӗнтӗ паян. Пирӗн районта та кашни хуçалăхрах мӗнле те пулин специалист кирлӗ: зоотехниксем те, ветфельдшерсем те, агрономсемпе электриксем те. Паян комбайнерсемпе трактористсен çитменни те 50-60 çул каялла çуралнисемшӗн тӗлӗнмелли пулăм.

Апла пулин те районти хăш-пӗр хуçалăхсене специалистсем килни савăнтарать. Ял хуçалăх пайӗнче каланă тăрăх, акă «Передовик» хуçалăхра В. Овчинников çамрăк агроном ӗçлеме тытăннă, «Геройӗнче» вара В. Романов зоотехник-селекционер аслă шкулта пухнă теорине практикăпа çирӗплетме пуçланă.

Çав хушăрах районти ӗçпе тивӗçтерекен центрта 16-29 çулхисем пурӗ 75 çамрăк учетра тăрать. Вӗсенчен 65-шӗ ӗççӗррисем шутланаççӗ. Малтанласа 11 çынна антикризис программипе килӗшӳллӗн тӗрлӗ ӗçсене янă. Халӗ вара тепӗр тăваттăшӗ ӗçлеççӗ.

**Н. НИКОЛАЕВА хатӗрленӗ.**

Саламлатпăр!



Юратнă аттене, асаттене, кукаçие – Анаткас Апаш (Соляной) ялӗнче пурăнакан **Иван Петрович ПЕТРОВА** 75 çул тултарнă ятпа чӗререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Тулăх пурнăç пултăр яланах,
Сывлăх ан хавшатăр нихăçан.
Ыр сунатпăр сана кăмăлтан,
Эсӗ хаклă пире яланах.

**Ăшă салампа: ывăлӗсем, хӗрӗсем, кинӗсем, кӗрӳшӗсем, мăнукӗсем.**